26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
АВГУСТ
25
ЮНКУН
170(6407) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ

ССР СОЮЗĔН СОВНАРКОМĔПЕ ВКП(б) ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕТĔНЧЕ

Нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă районсенчи хуçалăха юсас тĕлĕшпе халех тумалли ĕçсем çинчен

Нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă районсенчи хуçалăха хăвăртрах юсаса ярас тата çав районсенчи халăха пулăшас шутпа, ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ çапла тума йышăннă:

I.

Хĕвелтухăçĕнчи районсене куçарса кайнă выльăх-чĕрлĕхе колхозсене таварса парасси çинчен

1. Ярославль, Горький, Вологда, Киров, Рязань, Тамбов, Саратов, Куйбышев, Чкалов облаçĕсен исполкомĕсемпе ВКП(б) Обкомĕсене, Мордва, Мари, Дагестан АССР-сен Совнаркомĕсемпе ВКП(б) Обкомĕсене, Казах ССР-ĕн, Азербайджан ССР-ĕн тата Армян ССР-ĕн Совнаркомĕсемпе ВКП(б) Центральный Комитечĕсене—Калинин, Смоленск, Орел, Курск, Воронеж, Сталинград, Ростов, Тула облаçĕсенчи, Краснодарпа Ставрополь крайĕсенчи колхозсене çак облаçсемпе крайсенчен куçарса кайнă выльăх-чĕрлĕхсене çакăн чухлĕ таварса пама хушас:

	Ĕне выльăхсем	Сурăхсемпе качакасем	Лашасем
	(Миçе пуç памалли)		
Калинин облаçне	36.573	31.144	8.454
Вăл шутран:			
Горький облаçĕнчен	10.060	9.000	2.020
Ярославль облаçĕнчен	17.000	13.000	3.350
Иваново облаçĕнчен	9.062	9.141	3.081
Вологда облаçĕнчен	451	—	—
Смоленск облаçне	48.349	31.413	6.907
Вăл шутран:			
Ярославль облаçĕнчен	9.500	5.000	1.500
Горький облаçĕнчен	18.700	14.000	1.920
Иваново облаçĕнчен	832	379	869
Рязань облаçĕнчен	8.242	4.820	1.3?3
Мордва АССР-чен	6.850	3.947	1.011
Мари АССР-чен	3.610	2.777	221
Пенза облаçĕнчен	74	67	36
Тамбов облаçĕнчен	222	112	—
Куйбышев облаçĕнчен	242	311	12
Саратов облаçĕнчен	77	—	5
Курск облаçне	2.529	5.492	1.182
Вăл шутран:			
Тамбов облаçĕнчен	1.721	2.467	829
Саратов облаçĕнчен	80	365	151
Сталинград облаçĕнчен	728	2.660	202
Орел облаçне	21.399	39.668	8.375
Вăл шутран:			
Рязань облаçĕнчен	663	1.115	1.047
Тамбов облаçĕнчен	9.859	19.150	3.295
Саратов облаçĕнчен	3.814	6.032	813
Пенза облаçĕнчен	4.000	9.000	2.200
Ульяновск облаçĕнчен } Куйбышев облаçĕнчен }	2.275	2.636	400
Мордва АССР-чен	788	1.735	620
Воронеж облаçне	9.539	20.228	3.774
Вăл шутран:			
Тамбов облаçĕнчен	957	3.596	648
Саратов облаçĕнчен	7.272	13.519	2.525
Казах ССР-чен	74	361	20
Сталинград облаçĕнчен	1.236	2.752	581
Ростов облаçне	51.506	143.188	17.229
Вăл шутран:			
Дагестан АССР-чен	1.461	1.763	851
Азербайджан ССР-чен	1.057	1.530	390
Саратов облаçĕнчен	3.189	4.847	968
Казах ССР-чен	39.773	105.366	12.855
Чкалов облаçĕнчен	6.026	29.682	2.165
Сталинград облаçне	14.530	34.379	1.749
Вăл шутран:			
Казах ССР-чен	13.878	33.332	1.575
Чкалов облаçĕнчен	652	1.047	174
Ставрополь крайне	12.541	35.909	5.269
Вăл шутран:			
Азербайджан ССР-чен	8.200	15.600	3.100
Дагестан АССР-чен	3.800	19.500	1.400
Грузин ССР-чен	154	—	127
Армян ССР-чен	217	8?	556
Казах ССР-чен	370	-	86

2. Çапла тăвас: эвакуациленĕ выльăхсене усрама илнĕ колхозсен, совхозсен тата ытти организацисен, çавăн пекех тата колхозниксемпе рабочисен, служащисен çав выльăхсене пурне те тавăрса памалла, çавăн пекех тата пĕр-пĕр колхоз эвакуациленĕ выльăх-чĕрлĕхе тытса усранă чухне çав выльăх-чĕрлĕхрен государствăна аш-какай памалли хă[illegible]

[illegible]

3. Выльăхсене каялла тавăрса паракан тата вĕсене хăйсен аллине йышăнакан облаçсен (крайсен) исполкомĕсене тата союзлă республикăсенчи компартисен Центральнăй Комитечĕсене, автономлă тата союзлă республикăсен Совнаркомĕсене [illegible]

[illegible] аллинчен теприсен аллине парассине 1943 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр вĕçлеме хушас, çак ĕçе ăна каялла таварракан выльăх-чĕрлĕхе яланлăх пуранма вырнаçакан вырăнсене—Калинин, Смоленск, Тула, Курск тата Орел облаçĕсем тăрăх октябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр илсе çитерес шутпа, Сталинград, Ростов, Воронеж облаçĕсем тăрăх тата Краснодарпа Ставрополь крайĕсем тăрăх октябрĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр илсе çитерес шутпа çавăн пек тумалла.

4. Нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă районсене таварракан выльăх-чĕрлĕхсене выльăх-чĕрлĕхсен хуçисем пулнă колхозсене кăна таварса памалла тăвас. Çав выльăх-чĕрлĕхе ытти колхозсем хушшинче валеçме чарас. Выльăх-чĕрлĕх тытнă колхозсене вĕсен выльăхĕсене таварса парассине область (край) исполкомĕсен уполномоченнăйĕсем акт тăрăх туса ирттереççĕ, çав актра çул çинче килнĕ чухне выльăх-чĕрлĕх кĕтĕвĕнче пулса иртнĕ улшăнусене пурне те кăтартса парӑççĕ.

5. Выльăхсем усрама илнĕ облаçсемпе крайсен исполкомĕсене, автономлă тата союзлă республикăсен Совнаркомĕсене, ВКП(б) обкомĕсемпе крайкомĕсене тата союзлă республикăсен Центральный Комитечĕсене ирĕке кăларнă районсене таварса пама тивĕçлĕ мĕнпур выльăх-чĕрлĕхсене ветеринари тĕлĕшпе пăхса тухассине тата çул çинче чир-чĕртен сыхланмалла тăвассине 1943 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пурнăçа кĕртме хушас.

6. Хĕвелтухăçĕнчи районсене куçарса кайнă выльăх-чĕрлĕхсене нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă районсене каялла таварса парас мĕнпур ĕçе ертсе пырассине, çав выльăх-чĕрлĕхе вăхăтра, сыхăлăхлăн таварса парас тĕлĕшпе ответлăха СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ çине хурас.

СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне çак постановлени йышăннă хыççăн икĕ кунлăх срокра эвакуациленĕ выльăх-чĕрлĕхсем усранакан облаçсене пур çĕре те СССР Наркомземĕн уполномоченнăйĕсене яма хушас.

СССР Наркомземне, облисполкомсемпе, крайисполкомсемпе, союзлă тата автономлă республикăсен Совнаркомĕсемпе пĕрле, выльăхсене куçарса каймалли çулсене палăртса хума тата выльăхсем каякан çулсем çинче çителĕклĕ таран апат-çимĕçсем, шăвармалли вырăнсем тупса хума, ветеринарипе зоотехника тĕлĕшĕнчен пăхассине йĕркелеме, выльăхсене юханшывсем урлă каçарассине организацилеме хушас.

Оборона Халăх Комиссариатне Хĕрлĕ Çарăн резервĕнчен тата тылри ветеринари учрежденийĕсенчен СССР Наркомземĕн аллине ноябрĕн 1-мĕшĕччен вăхăта 50 ветврач тата 100 ветфельдшер пама хушас, çав ветврачсемпе тата ветфельдшерсемпе выльăхсене куçарса каякан çулсем çинче выльăхсене ветерина[illegible]

[illegible]

7. Калинин, Смоленск, Курск, Орел, Ростов, Сталинград, Воронеж облаçĕсен исполкомĕсене, ВКП(б) обкомĕсене, Ставрополье крайисполкомне тата ВКП(б) крайкомне 1943 çулхи августăн 25-мĕшĕ [illegible] выльăх-чĕрлĕхе [illegible] кăçарса [illegible] пыракан [illegible] хушас.

8. Выльăхсене пăхса усрама [illegible] облаçсен (крайсен) исполкомĕсене, автономлă тата союзлă республикăсен Совнаркомĕсене [illegible]

9. Колхоз правленийĕсене—выльăхсене хăваласа каякан колхозниксене [illegible]

10. Эвакуациленĕ выльăхсене каялла [illegible] выльăх-чĕрлĕхсене юханшывсем урлă каçарнишĕн тӳлеме, выльăх-чĕрлĕхсене куçарса кайнă çĕрте ĕçлекен специалистсене командировкăшăн тӳлеме) СССР Совнаркомĕн резерври фондĕнчен 11.500 пин тенкĕ уйăрса парас, вăл шутран Калинин облисполкомне — 2.000 пин тенкĕ, Смоленск облисполкомне 2.000 пин тенкĕ, Орел облисполкомне—1.000 пин тенкĕ, Курск облисполкомне — 1000 пин тенкĕ, Воронеж облисполкомне— 2.000 пин т., Сталинград облисполкомне—1000 пин т., Ростов облисполкомне—1.000 пин т., Тула облисполкомне—500 пин т., Краснодар крайисполкомне—500 пин т., Ставрополь крайисполкомне — 500 пин т. уйăрса парас.

11. СССР хатĕрлев Халăх Комиссариатне эвакуациренрен тавăракан выльăхсене çул çинче çитермешкĕн СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн аллине 2.000 тонна утă тата 500 тонна концентрациллĕ апат-çимĕçсем уйăрса пама хушас.

12. СССР Суту-илӳ Халăх Комиссариачĕпе СССР Центросоюзне выльăхсене хăваласа пыракан колхозниксемпе ялхуçалăх специалисчĕсене, райисполкомсен командировочнăй удостоверенийĕсене кăтартнă тăрăх, вĕсем пыракан çул çинче çăкăр парса тăрассине йĕркелеме хушас.

СССР Хатĕрлев Халăх Комиссариатне выльăхсене хăваласа каякан колхозниксене çул çинче çăкăр парса тăма СССР Центросоюзĕн аллине 1.000 тонна çăнăх тата СССР Суту-илӳ Халăх Комиссариачĕн аллине 500 тонна çăнăх пама хушас.

13. СССР Наркомземне, Наркомречфлота, Сталинградпа Саратов облисполкомĕсене—Казахстантан тата Сталинградпа Саратов облаçĕсен Атăл лешъенчи вырăнĕсенчен тавăрнакан выльăх-чĕрлĕхсене Атăл урлă каçарассине организацилеме хушас.

14. СССР Наркомземне тата Центрти статистика управленине 1943 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа выльăхсем усранă вырăнсенче мĕн чухлĕ выльăх-чĕрлĕх каялла йышăнни çинчен, çав выльăх-чĕрлĕхсене куçарса каяс ĕç мĕнле пыни çинчен тата выльăх-чĕрлĕхсем яланлăха вырнаçакан вырăнсене мĕн чухлĕ выльăх-чĕрлĕх пырса çитни çинчен 5 кунта пĕрре телеграф тăрăх отчетсем илсе тăмалла тума хушас.

15. СССР Наркомземне, СССР Госпланăн Центрти статистика управленине, Украина ССР-ĕн Совнаркомне, Воронеж, Саратов, Сталинград, Ростов, Чкалов, Актюбинск, Хĕвеланăç Казахстан облаçĕсен исполкомĕсемпе, Ставропольпе Краснодар крайĕсен исполкомĕсемпе, Калмык тата Дагестан АССР-сен, Казах СССР-пе Азербайджан ССР-ĕн Совнаркомĕсемпе пĕрле, Украина ССР-чи колхозсенчен эвакуациленĕ мĕнпур выльăх-чĕрлĕхсене, çултe асăннă облаçсемпе крайсенче тата республикăсенче вырнаçтарса тухнăскерсене, шута илсе актсем çырса палăртма тата çав выльăх-чĕрлĕхсене çителĕклĕ таран апат-çимĕçсемпе çурт-йĕрсем тупса парас, çавăн пекех эвакуациленĕ выльăх-чĕрлĕхсене пурне те сыхласа хăварас тĕлĕшпе мерăсем йышăнма хушас.

16. СССР Наркомземне, УССР Совнаркомне тата Украинăри комму[illegible]нистсен (большевиксен) партийĕн Центральный Комитетне, Украинăра куçарса кайнă выльăх-чĕрлĕхсене каялла [illegible] ВКП(б) Обкомĕсемпе пĕрле, çакна тума хушас: вĕсем выльăх-чĕр[illegible] УССР-чи ирĕке кăларнă районсене [illegible] хăваласа кайма [illegible] актсене [illegible] кăтартнă йĕркепе хăваласа каймалла.

17. Хĕвелтухăçĕнчи районсенчен каялла кĕрекен выльăх-чĕрлĕхе вырнаçтарассине çак йĕркепе йышăнса вырнаçтарма хушас:

а) облаçра пырса çитекен кашни кĕтĕве облисполкомăн е крайисполкомăн ятарласа уйăрнă уполномоченнăйĕ акт тăрăх йышăнмалла, çав актра çул çинче мĕнле улшăнусем пулни пĕтĕмпех кăтартса çырмалла;

б) облисполкомсен е крайисполкомсен кашни кĕтĕве йышăннă уполномоченнăйĕсен çав выльăх-чĕрлĕхе [illegible] колхозсене вăл колхозсене пырса çитнĕ кунтан пуçласа 3 кунран кая юлмасăр таварса парать. Халлĕхе ирĕке кăларнă районсенчи колхозсене вырнаçтарайман выльăх-чĕрлĕхе ытти районсенчи колхозсене парать, çĕсене вăл облисполкомпа ВКП(б) Обкомĕ çирĕплетнĕ план тăрăх ярать.

18. Воронеж, Калинин, Курск, Орел, Ростов, Сталинград, Смоленск тата Тула облаçĕсен исполкомĕсемпе ВКП(б) Обкомĕсене тата Краснодарпа Ставрополь крайĕсен исполкомĕсемпе ВКП(б) Крайкомĕсене çак ĕçсене тума хушас:

а) кашни колхозрах выльăхсене килте усранă вăхăтра тăрантарса пурăнма шултăра апатпа сĕткенлĕ апат çителĕклĕ хатĕрлесе хумалла, çавна тума утă çулмалли тата силос хывмалли плансене пурнăçламалла; утă хатĕрлемелли плана пурнăçламан колхозсенче утă хатĕрлемелли урăх майсем шыраса тупмалла, акнă курăксене тата хăй тĕллĕн ӳсекен курăксене тепĕр хут çулас ĕçе организацилемелле;

б) пухса хатĕрленĕ выльăх апатне халех учета илмелле, ăна колхоз правленийĕсен халех йышăнмалла, хатĕрленĕ мĕнпур апатсене вăрласран тата çухаласран сыхламалла;

в) выльăхсем хĕл каçмалли çĕре октябрĕн 1-мĕшĕччен выльăх апачĕ илсе пырас ĕçе организацилемелле, выльăх апачĕ унпа пĕтĕм выльăха çул çук вăхăтра тăрантарса усрама çителĕклĕ пулмалла;

г) Хĕвелтухăçĕнчи районсенчен каялла илсе килекен выльăх-чĕрлĕхе йышăнакан кашни колхозрах выльăхсене хĕлле тытса усрама кирлĕ хуралтăсем пуррине тата вĕсем мĕнле тăнине сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне тĕрĕслемелле, выльăх витисене юсас тата çĕнĕрен туса лартас тĕлĕшпе кирлĕ мерăсем йышăнмалла, каялла гавăрăнакан пĕтĕм выльăх валли хĕл каçма юрăхлă витесем çителĕклĕ пулмалла.

19. Бенедиктов (комисси председателĕ), Мотовилов (Главлесоохрана), Лопухов (Главснаблес), Салтыков (Наркомлес), Арутюнов (НКПС) юлташсенчен тата тивĕçлĕ обл (край) исполкомăн, союзлă тата автономиллĕ республика Совнаркомĕн председателĕнчен тăракан комиссие çак ĕçе тума хушас: вăрçă ĕçĕсем пирки сиен курнă колхозсене выльăх витисем тумашкăн вырăнти вăрмансенчен, шыв сыхлакан зонăри тата государство фондĕнчи вăрмансенчен вăрман касмалли участоксем уйăрса парас ыйтусене пăхса тухса татса памалла.

20. ВКП(б) обкомĕсемпе крайкомĕсене тата облисполкомсемпе крайисполкомсене сентябрĕн 15-мĕшĕччен çак ĕçе тума хушас: нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă кашни районрах выльăх-чĕрлĕх фермисенче çын çителĕклипе çителĕклĕ маррине тĕрĕслемелле тата выльăх-чĕрлĕх фермисене ферма заведующийĕсем, дояркăсем, телятницăсем, свинаркăсем, конюхсем тата ыттисем те тупса парас тĕлĕшпе кирлĕ мерăсем йышăнмалла.

21. СССР Наркомземне обл(край) исполкомсемпе тата союзлă республикăсен, автономиллĕ республикăсен совнаркомĕсемпе пĕрле кашни ирĕке кăларнă облаçра ветсанитарсем, кĕçĕн фельдшерсем тата выльăх-чĕрлĕх енĕпе ĕçлекен техниксем хатĕрлемешкĕн октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 5—7 шкул уçма хушас, кашни шкулта 100 çынтан пуçласа 150 çынна

(Малалли 2-мĕш страницăра).

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 23-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 23-мĕшĕнче пирĕн çарсем хаярран çапăçнă хыççăн тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе те штурмласа ХАРЬКОВ хулине йышăнса илнĕ.

ХАРЬКОВ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах çак чаçсем палăрнă: АНИСИМОВ генерал-майорăн 252-мĕш стрелковăй дивизийĕ, БУНЯШИН полковникăн 84-мĕш стрелковăй дивизийĕ, ТРАВНИКОВ генерал-майорăн 299-мĕш стрелковăй дивизийĕ, ЧУРМАЕВ генерал-майорăн 28-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизийĕ, МАКАРОВ генерал-майорăн 116-мĕш стрелковăй дивизийĕ, СЕРЮГИН полковникăн 89-мĕш Гвардейски Белгородски стрелковăй дивизийĕ, ГОВОРУНЕНКО полковникăн 375-мĕш стрелковăй дивизийĕ, ВАСИЛЕНКО генерал-майорăн 15-мĕш гвардейски стрелковăй дивизийĕ, ВАСИЛЕВСКИЙ полковникăн 183-мĕш стрелковăй дивизийĕ тата ТИХОМИРОВ генерал-майорăн 93-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизийĕ уйрăмăнах палăрнă.

Донбасра, ИЗЮМРАН кăнтăртарахри тата ВОРОШИЛОВГРАДРАН кăнтăр-хĕвеланăçнерехри районра, пирĕн çарсем тăшманпа ăнăçлăн çапăçнă. ВОРОШИЛОВГРАДРАН кăнтăр хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем виçĕ кун хушшинчи çапăçусенче 30—35 километр малалла куçнă, халăх пурăнакан 30 пункта ытла, вăл шутра ДОНЕЦКО-АМБРОСИЕВКА хулипе чугунçул станцине йышăнса илнĕ.

Августăн 23-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 85 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 134 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Паян пирĕн çарсем хаяррăн çапăçнă хыççăн тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе те штурмласа Харьков хулине йышăнса илнĕ. Совет дивизийĕсем Харькова хĕвеланăçĕнчен, çурçĕртен тата хĕвелтухăçĕнчен вăркăнса кĕрсе кайнă. Урамсенче хаяр çапăçусем пуçланса кайнă. Пирĕн штурмлакан отрядсем нимĕçсене çирĕплетнĕ çуртсенчен тата оборонăллă сооруженисенчен хĕсе-хĕсе кăларнă. Паян кăнтăрла совет çарĕсем Харьков хулине хӳтĕлекен нимĕç гарнизонне аркатса тăкнă та хулана пĕтĕмпех йышăнса илнĕ. Тăшман питех те пысăк çухатусем тӳснĕ. Халĕ вăл пирĕн çарсем пыра-пыра çапнипе каялла чакать. Пирĕннисем трофейăсем нумай тытса илнĕ.

Харьковран хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем нимĕçсен пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсемпе çапăçнă. Совет боецĕсем тăшманăн пур контратакисене те сирсе янă, тăшманăн 2000 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен 40 танкĕнчен кая мар персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Тепĕр участокра пĕр соединенин боецĕсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, малалла куçнă, халăх пурăнакан 15 пункта йышăнса илнĕ. Çав пунктсемшĕн пынă çапăçусенче нимĕç пехотине икĕ батальонран кая мар пĕтерсе тăкнă. Тăшмантан 25 тупă, 32 миномет, 162 пулемет тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче кун каçиччен тăшманăн 18 самолетне персе ӳкернĕ. Унсăр пуçне, зенитнăй артиллери нимĕçсен 11 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Донбасра, Ворошиловградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, пирĕн çарсем çапла малалла тапăнса пынă. Тăшман хаяррăн хирĕç тăнă, темиçе хутчен те контратакăсем тунă. Пирĕн çарсем нимĕçсем хирĕç тăнине çапса хуçнă та халăх пурăнакан 30 пункта ытла, вăл шутра Донецко-Амбросиевка хулипе чугун çул станцине йышăнса илнĕ. Тăшман пысăк çухатусем тӳсет. Пĕр соединенин чаçĕсем кăна нимĕçсен 1500 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă, тăшманăн 15 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. 100 гитлеровеца ытла тыткăна илнĕ.

Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 17 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Изюмран кăнтăртарахра пирĕн çарсем тăшманпа ăнăçлăн çапăçнă, питех те кирлĕ позицисем йышăнса илнĕ. Çав позицисене каялла туртса илес тесе, тăшман сакăр хутчен контратака тунă, ку контратакăсенче темиçе хут та штык вĕççĕн çапăçнă. Каç пулса килнĕ тĕле нимĕçсен пур контратакисене те сирсе янă. Çапăçусенче 2.000 гитлеровеца ытла вĕлернĕ, тăшманăн 28 танкне тата хăй тĕллĕн çӳрекен 4 туппине персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă.

Пирĕн авиаци тăшман çарĕсене тата унăн тылне пыра-пыра çапнă. Нимĕçсен çар эшелонĕсем çине бомбăсем пăрахнипе пулă Славянск, Красноград, Лихачево станцийĕсенче 70 тĕлте ытла пушар тухнă, взрывсем нумай пулнă. Пирĕн летчиксем нимĕçсен темиçе вунă танкне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен 9 складне сирпĕнтерсе янă, тăшманăн çарсемпе грузсем турттарса пыракан 200 автомашинине çити çĕмĕрсе тăкнă.

* * *

Спас-Деменск хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн штурмлакан отрядсем вырăнти çапăçусем туса пынă. Пĕр участокра тăшман темиçе атака тунă. Совет подразделенийĕсем тăшман атакисене сирсе янă, нимĕçсен 600 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Тăшмантан 2 тупă тата 58 пулемет тытса илнĕ.

Кун каçиччен сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери нимĕçсен 24 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Каменец-Подольск облаçĕн районĕсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрядне хирĕç нимĕçсем пысăк карательнăй экспедици янă. Совет патриочĕсем гитлеровецсен хаяр атакисене темиçе кун хушши сирсе тăнă, тăшманăн 400 салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе тăкнă. Чернигов облаçĕнчи партизансен темиçе отрячĕ августăн 8-мĕшĕнчен пуçласа 12-мĕшне çитиччен нимĕçсен техникăпа боеприпассем турттарса пыракан 4 çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă.

* * *

Орел облаçĕн нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă Хвастовичи ялĕнче пурăнакансем А. Новиков, М. Свиридов тата М. Новикова çапла каласа панă: «1941 çулхи октябрь уйăхĕнче Хвастовичи ялне кĕрсенех, нимĕçсем пурне те çаратма пуçларĕç. Салтаксем çуртран çурта çӳресе, пур пек тырпула, выльăх-чĕрлĕхе тата хаклă япаласене йăлтах тытса илчĕç. Ялти халăха çырса тухнă хыççăн нимĕç комендатури кашни çыннах сулахай алă çинче çыхса çӳреме номер çырнă тутăр пачĕ. Урама çав номерсĕр тухсанах, нимĕçсем ярса илетчĕç те хĕнетчĕç, арестлетчĕç. Нимĕçсен фашистла палачĕсем Хвастовичи ялне çывăхри ялсенчи хĕрарăмсене, ачасене, ватă çынсене хăваласа илсе пыратчĕç те унта вĕсене асаплантаратчĕç, унтан вĕлеретчĕç. Ял варринче сĕт завочĕ умĕнче нимĕçсем çакса вĕлермелли пусма лартрĕç. Вара ун çинче тĕрлĕ вăхăтра мирлĕ совет гражданне 150 çынна çакса вĕлерчĕç. Нимĕç комендантчĕ обер-лейтенант Гофман панă приказ тăрăх гитлеровецсем вăрманта Фроловски мăн çул хĕрринче хĕрарăмсен ушкăнне персе пăрахрĕç. Ирсĕрсем çав хĕрарăмсен ачисене сухăнь завочĕ патне тухрĕç те автоматпа персе вĕлерчĕç. Тарçăсемпе сутă тăвакан нимĕçсем Хвастовичирен тата ун çывăхĕнчи ялсенчен 500 çынна ытла Германие каторгăна хăваласа кайрĕç. Каялла чакма тытăнсан, нимĕçсем ялти пур çуртсене те вут тĕртсе çунтарса ячĕç, шкула, армана, вăрман заводне, больницăна тата пионерсен çуртне сирпĕнтерсе ячĕç».

Харьков хулине ирĕке кăларнă ятпа—50 лавлă хĕрлĕ обоз

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, августăн 21-мĕшĕ. (Телефонпа). Мухтавлă Хĕрлĕ Çар Украинăн иккĕмĕш столицине—Харькова ирĕке кăларнă хыпар совет халăхне пысăк савăнăç кӳчĕ. Тăван Украинăн ывăл-хĕрĕсен чĕрисемпе пĕрлех, чăваш ĕççыннийĕсен чĕрисем те хавассăн тапаççĕ. Харьков каллех пирĕн! Геройла Хĕрлĕ Çар хăватлăн пыра-пыра çапнине нимĕçсен фашистла мерзавецĕсем тӳссе тăраймарĕç. Генерал-полковник Конев, арми генералĕсем Ватутинпа Малиновский ертсе пыракан войскăсем, çак хулана ирĕке кăларса, ĕмĕрлĕхе чапа тухрĕç.

Янмурзино ялсоветĕнчи «Янмурзино» колхоз çамрăкĕсем Сталин юлташăн приказне, ĕнер каçхине радиопа итлерĕç. Вĕсем Харьков хулине ирĕке кăларнă войскăсен ячĕпе паян 50 лавран хĕрлĕ обоз организацилерĕç. Обоз пуçĕнче—колхозри комсомол организацин секретарĕ Сергей Ильин.

Н. СКВОРЦОВ.
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

ССР СОЮЗĔН СОВНАРКОМĔПЕ ВКП(б) ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕТĔНЧЕ

Нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă районсенчи хуçалăха юсас тĕлĕшпе халех тумалли ĕçсем çинчен

(Малалли. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр).

çити вĕренмелле, вĕсенче 3 уйăхран пуçласа 12 уйăха çитиччен вĕрентмелле:

СССР Наркомземне кĕçĕн ветфельдшерсемпе выльăх-чĕрлĕх техникĕсен кĕске срокла шкулĕсенче вĕренекен çынсене уйăхра 150 тенкĕрен пуçласа 200 тенке çити стипенди парса тăма ирĕк парас.

Çав шкулсене тытса тăмалли укçана СССР Наркомземĕн 1943 çулхи смети тăрăх парас.

22. Союзлă тата автономиллĕ республикăсен совнаркомĕсене, облисполкомсемпе крайисполкомсене нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă районсене ĕçлеме ялхуçалăхĕнчи специалистсене СССР Наркомземĕ хушнă тăрăх пĕр тытăнса тăмасăр каялла яма хушас.

23. Ялхуçалăх издательствипе СССР Наркомземне нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă районсем валли 1943 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕччен выльăх-чĕрлĕхсене мĕнле пăхса усрасси тата тăрантарасси çинчен литература йышлăн пичетлесе кăларма хушас. Çак ĕçе тума ялхуçалăх издательствине 50 тонна хут уйăрса парас.

II.

Колхозсенче выльăх-чĕрлĕх хисепне ÿстермелли мерăсем çинчен

1. Калинин, Смоленск, Воронеж, Сталинград, Ростов, Курск тата Орел облаçĕсен исполкомĕсене, Краснодарпа Ставрополь крайĕсен исполкомĕсене колхозниксен, рабочисен тата служащисен выльăхĕсене контрактацилемелли тата сутăн илмелли плана ÿстерме ирĕк парас, çакăн пекех тата путексене контрактацилемелли тата сутăн илмелли план туса ăна облаçсем тăрăх çакăн пек валеçес:

	Пăрусене хушса контрактацилемелли план	Путексене контрактацилемелли план
	пиншер	пуçăн
Калинин облаçĕ	20	30
Смоленск облаçĕ	3	3
Воронеж облаçĕ	15	5
Сталинград облаçĕ	20	15
Ростов облаçĕ	15	20
Курск облаçĕ	—	10
Орел облаçĕ	5	10
Краснодар крайĕ	15	10
Ставрополь крайĕ	6	10

2. Çакăн пек тăвас: колхозсен выльăх-чĕрлĕх фермисене контрактаци шучĕпе пĕр пăру е икĕ путек панă колхозниксене 1943 çулта аш-какай парассинчен хăтарас, пĕр путек панă чухне — аш-какай парассине 50 процент чакарас.

3. Оккупациленĕ районсенчен тылри облаçсене куçарса кайнă лашасен çылăй пысăк пайне Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсене панине шута илсе, нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă районсенчи мĕнпур колхозсене 1943, 1944, 1945 çулсенче оборонăпа халăх хуçалăхĕ валли лаша парассинчен хăтарас.

4. Хĕрлĕ Çар ирĕке кăларнă тата ирĕке кăларакан районсенчи колхозсене çĕнĕрен выльăх-чĕрлĕхлĕ пулма пулăшас тесе, СССР Наркомземне 1943—44 çулсенче хĕвелтухăçĕнчипе центрти облаçсенче нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă облаçсем валли пур йышши выльăхсене те государство хакĕпе сутăн илес ĕçе организацилеме хушас.

Çав облаçсемпе республикăсем валли выльăх-чĕрлĕхе государство хакĕпе сутăн илес ĕçе тылри районсенче пурăнакан колхозсемпе колхозниксем, рабочисемпе служащисем хăйсен ирĕкĕпе сутас йĕркепе туса пымалла, сутнă выльăха вара выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне тултарнă шута кĕртмелле.

Ялхуçалăх банкне выльăх-чĕрлĕх тата лашасем илмешкĕн нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă районсенчи колхозсене çав выльăхсен пĕтĕм хакĕ чухлĕ кивçен укçа пама ирĕк парас.

5. Нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă районсенчи колхозсене 1942—43 çулсенче çуралнă çамрăк вăкăрсене пурне те ĕçлекен вăкăрсем ÿстермешкĕн сыхласа хăварма сĕнес.

III.

Колхозсенче кайăк-кĕшĕк ĕрчетес ĕçе йĕркелесе ярасси çинчен

1. Облисполкомсене, крайисполкомсене, ВКП(б) обкомĕсемпе крайкомĕсене çапла тума хушас: колхозсенче оккупациленчен пулнă кайăк-кĕшĕк фермисене пурне те 1943—44 çулсенче йĕркелесе ямалла тата ÿссе çитнĕ кайăк-кĕшĕк хисепне 1945 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне облаçсемпе крайсенчи колхозсен кайăк-кĕшĕк фермисенче çакăн чухлĕ çитермелле:

Краснодар крайĕ	1.100 пин
Ставрополь крайĕ	1.100 пин
Ростов облаçĕ	1.000 пин
Сталинград облаçĕ	550 пин
Воронеж облаçĕ	800 пин
Курск облаçĕ	250 пин
Орел облаçĕ	150 пин
Смоленск облаçĕ	150 пин
Калинин облаçĕ	400 пин.

2. Нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă районсенчи колхозсене кайăк-кĕшĕк ĕрчетес ĕçре пулăшас шутпа, СССР Наркомземне, Наркомсовхозне тата Сĕт-çупа Аш-какай Халăх Комиссариатне 1943 çулхи сентябрь—октябрь уйăхĕсенче государство хуçалăхĕсенчен колхозсене государствăн хатĕрлев хакĕсемпе сутма 500 пин пуç кайăк-кĕшĕк турттарса пыма хушас, вăл цифрăна облаçсем тăрăх çапла валеçес:

Орел облаçĕ	100 пин
Смоленск облаçĕ	100 пин
Калинин облаçĕ	50 пин
Курск облаçĕ	00 пин
Сталинград облаçĕ	50 пин
УССР районĕсем	100 пин.

РСФСР Наркомземне 1944 çулта инкубатор станцийĕсенчен колхозсене 9,6 миллион чĕпĕ сутма хушас, вăл цифрăна облаçсемпе крайсем тăрăх çапла валеçес:

Краснодар крайĕ	2.000 пин
Ставрополь крайĕ	2.000 пин
Ростов облаçĕ	2.000 пин
Сталинград облаçĕ	1.100 пин
Воронеж облаçĕ	1.800 пин
Курск облаçĕ	150 пин
Орел облаçĕ	80 пин
Смоленск облаçĕ	70 пин
Калинин облаçĕ	400 пин.

3. Облисполкомсене, крайисполкомсене, ВКП(б) обкомĕсемпе крайкомĕсене çапла тума хушас: кайăк-кĕшĕк хисепне ÿстермелли плана тата инкубатор станцийĕсенчен колхозсене, колхозсен фермисене комплектласа çитерне хыççăн колхозниксене чĕпĕсем сутмалли плана районсем патне çитермелле, кÿлĕсемпе çырмасем тытакан колхозсенче шывра ишекен кайăк-кĕшĕке (хурсемпе квакалсем) ĕрчетмелли фермăсене йĕркелес тата организацилес тĕлĕшпе мерăсем йышăнмалла.

4. Облисполкомсене, крайисполкомсене, ВКП(б) обкомĕсемпе крайкомĕсене çапла тума хушас: нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем аркатса пĕтернĕ инкубаторнăй станцисене 1943—44 çулсенче 55 станци йĕркелесе ĕçе ямалла, вăл цифрăна облаçсемпе крайсем тăрăх çапла валеçес:

	1943ç.	1944ç.
Краснодар крайĕ	5	2
Ставрополь крайĕ	6	—
Ростов облаçĕ	2	2
Сталинград облаçĕ	6	—
Воронеж облаçĕ	6	—
Курск облаçĕ	—	13
Орел облаçĕ	—	7
Смоленск облаçĕ	1	2
Калинин облаçĕ	—	3

5. РСФСР Совнаркомне инкубатор станцийĕсем валли вырăнти промышленность предприятийĕсенче 1943 çулхи IV-мĕш кварталта тата 1944 çулхи 1-мĕш кварталта 200 инкубатор туса кăларссине пурнăçа кĕртме хушас, кашни инкубатор 3 пинрен пуçласа 30 пине çити çăмарта хумалăх пулмалла.

6. РСФСР Наркомместпромне инкубаторсем туса кăларма 1943 çулхи IV-мĕш кварталта металл тата ытти строительство материалĕсем, çавăн пекех тата РСФСР Наркомземне инкубатор станцисем валли кăмрăк çакăн чухлĕ уйăрса пама СССР Госпланне хушас:

шăратнă чугун	26 тонна
сортлă тимĕр	168 тонна
шуç тимĕр	127 тонна
декапированнăй тимĕр	22 тонна
витмелли цинкланă тимĕр	31 тонна
газ трубисем	210 тонна
çÿхе стеналлă трубасем	2.800 метр
фитинг	21 тонна
йăс	3,1 тонна
листалла латунь	1,0 тонна
пралуклă латунь	0,3 тонна
тимĕр пралук	0,5 тонна
тимĕр ала	25,0 пин тăваткăл метр
шурупсем	5,5 тонна
гайкăсем	2,5 тонна
заклепкăсем	9,0 тонна
йывăç (чăрăшпа хыр)	1.400 кубла метр
кăмрăк	2.200 тонна.

7. СССР Авиаци промышленность Наркоматне 1943 çулхи IV-мĕш кварталта хăйĕн заводĕсенче çакăн чухлĕ тĕрлĕ хатĕрсем туса кăларса, инкубаторсене йĕркелесе ямашкăн РСФСР Наркомместпромне пама хушас:

ампульнăй терморегуляторсем —	27.200 штука
«фультон» йышши терморегуляторсем —	116 штука
çакса ямалли термометрсем	27.200 штука
кĕтеслĕ термометрсем —	2000 »
психрометрсем	6000 »

8. РСФСР Наркомземне ирĕке кăларнă районсенчи инкубатор станцийĕсем валли 1944 çулхи пĕрремĕш çурçулта 16 миллион çăмарта уйăрса парас, вăл шутран РСФСР Наркоммясомолпромĕн кулленхи хатĕрлевĕсем шучĕпе — 7 миллион штука, Центросоюз хатĕрлевĕсем шучĕпе—5 миллион штука, çавăн пекех тата РСФСР Наркомсовхозĕн кайăк-кĕшĕк совхозĕсенчен 4 миллион штука ăратлă чăхсен çăмартине памалла.

9. РСФСР Наркомземне 1944 çулта инкубатор станцийĕсенчен колхозсене чĕпĕсем пама ирĕк парас, çав чĕпĕсемшĕн колхозсен 1945 çулта çăмарта памалла тăвас.

10. Облисполкомсемпе крайисполкомсене кашни инкубатор станцийĕ валлиех 1—2-шер лаша туянмашкăн инкубатор станцийĕсене пулăшма хушас.

11. Облисполкомсене, крайисполкомсене, ВКП(б) обкомĕсемпе крайкомĕсене тата СССР Наркомземне 1944 çулхи июнĕн 1-мĕшĕччен 4 уйăхлă курссенче вĕрентсе 580 техник-птицевод хатĕрлеме хушас, вăл цифрăна облаçсемпе крайсем тăрăх çапла валеçес:

Краснодар крайĕ	75
Ставрополь крайĕ	55
Ростов облаçĕ	60
Сталинград »	60
Воронеж »	80
Курск »	65
Орел »	65
Смоленск	50
Калинин »	70

Кайăк-кĕшĕк ĕрчетме вĕрентекен курссенче вĕренекенсене кашни уйăхра 150-шар тенкĕ стипенди памалла тăвас.

12. РСФСР Наркомземне çĕрĕç пайĕсемпе инкубатор станцийĕсенче ĕçлеме техникум вĕрентсе пĕтерекенсенчен 1943—44 çулсенче 130 специалиста уйăрса яма хушас, вăл цифрăна облаçсемпе крайсем тăрăх çапла валеçес:

	1943 ç.	1944 ç.
Краснодар крайĕ	10	10
Ставрополь крайĕ	10	10
Ростов облаçĕ	7	10
Сталинград облаçĕ	3	7
Воронеж облаçĕ	5	10
Курск облаçĕ	4	10
Орел облаçĕ	3	10
Смоленск облаçĕ	2	10
Калинин облаçĕ	1	8

IV.

Государствăна ялхуçалăх продукчĕсем тăратас тĕлĕшпе колхозсене, колхозниксене, единоличниксене, рабочисемпе служащисене льготăсем парасси çинчен тата 1943 çулта хатĕрлевсем ирттермелли йĕркесем çинчен

1. Райисполкомсемпе ВКП(б) райкомĕсене нимĕç оккупацийĕнчен сиен курнă колхозниксен хуçалăхĕсене, единоличниксен хуçалăхĕсене, рабочисемпе служащисен тата алăстаçисен хуçалăхĕсене 1943 çулта государствăна мĕнпур ялхуçалăх продукчĕсем парассинчен пĕтĕмĕшпех е пĕр пайне хăтарма хушас.

2. 1943 çулта государствăна ялхуçалăх продукчĕсем парассинчен çаксене хăтарас:

а) Хĕрлĕ Çар воинĕсен тата партизансен хуçалăхĕсене, вĕсен çемьисенче хуçалăхра ĕçлеме пултаракан пĕр çын çумĕнче 7 çула çитиччен ачасем юлнă пулсан;

б) воинсемпе партизансен ĕçлеме пултарайман ашшĕ-амăшĕсен хуçалăхĕсене, çемьере хуçалăхра ĕçлеме пултаракан çын çук пулсан;

в) ватăлнине пула ĕçлеме пултарайман çынсен—арçынсен—60 çула çитнисен тата хĕрарăмсен—55 çула çитнисен хуçалăхĕсене, хуçалăхра ĕçлеме пултаракан урăх çынсем çук пулсан;

г) учительсен, агрономсен, зоотехниксен, землеустроительсен, медицинăпа ветеринари врачĕсен, фельдшерсен, мелиораторсен тата ялхуçалăх техникĕсен, МТС-семпе МТМ-сенчи тата совхозсенчи инженерсемпе механиксен тата директорсен хуçалăхĕсене, вĕсем харпăрхăй хуçалăхĕнче ялхуçалăх артелĕн Уставĕ тăрăх çав районри колхозниксен хуçалăхĕсем валли панă хисепрен ытлашши выльăх-чĕрлĕхсем тытса усрамаççĕ пулсан.

3. Воинсемпе партизансен хуçалăхĕсене, вĕсен çемьисенче хуçалăхра ĕçлеме пултаракан пĕр çын пуçне ĕçлеме пултарайман икĕ е ытларах çынсем пулсан, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли нормăран 50 процент чухлĕ льгота парас.

4. Нимĕç оккупацийĕнчен 1943 çулхи июлĕн 1-мĕшĕ хыççăн ирĕке кăларнă районсенчи колхозниксен хуçалăхĕсене, единоличниксен хуçалăхĕсене, рабочисемпе служащисен тата алăстаçисен хуçалăхĕсене 1943 çулта государствăна обязательнăй йĕркепе тир-сăран чĕртаварĕ, çăм, çăмарта, брынза-чăкăт, çу паракан культурăсен вăрлăхĕсем, йĕтĕн-кантăр парассинчен хăтарас.

5. Облисполкомсене тата ВКП(б) Обкомĕсене нимĕç оккупацийĕнчен уйрăмах пысăк сиен курнă уйрăм колхозсене 1943 çулта государствăна ялхуçалăх продукчĕсем парассинчен пĕтĕмĕшпех е пĕр пайне хăтарма хушас.

6. Нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă районсенчи колхозсене 1943 çулта государствăна обязательнăй йĕркепе тир-сăран чĕртаварĕ, брынза-чăкăт, çăмарта, йĕтĕн-кантăр парассинчен хăтарас.

7. Нимĕç оккупацийĕнчен 1943 çулхи июлĕн 1-мĕшĕ хыççăн ирĕке кăларнă районсенчи колхозсене 1943 çулта государствăна аш-какай, сĕт тата çăм парассинчен хăтарас.

8. Нимĕç оккупацийĕнчен 1943 çулта ирĕке кăларнă районсенчи колхозсемшĕн государствăна обязательнăй йĕркепе тĕштырă, çу тумалли культурăсен вăрлăхĕсем, çĕрулмипе пахча-çимĕçсем памалли çинчен калакан закона 1943 çулта вăя кĕртмесĕр чарăнса тăрас.

9. Çапла тăвас: нимĕç оккупацийĕнчен 1943 çулхи июлĕн 1-мĕшĕ хыççăн ирĕке кăларнă районсенчи колхозсем 1943 çулхи тырпулран государствăна паракан тĕштырăпа хĕвелçаврăнăшне Хĕрлĕ Çарăн тырă фондне хываççĕ, çакă вăл налог вырăнне шутланать, ăна пухса илмелли тĕштырăсемпе хĕвелçаврăнăшĕн кашни гектарĕнчен çакăн пек нормăсемпе шутламалла:

(килогрампа)	тĕштырă	хĕвелçаврăнăш
Орел облаçĕ	70	—
Смоленск »	50	—
Курск »	70	120
Калинин »	40	—
Украина ССР-ĕн облаçĕсем	90	150

Нимĕç оккупацийĕнчен 1942—43 çулсенчи кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра ирĕке кăларнă ытти районсенчи колхозсем тĕштырăпа хĕвелçаврăнăшне Хĕрлĕ Çарăн тырă фондне СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1943 çулхи июлĕн 10-мĕшĕнче йышăннă 740—754 номерсемлĕ постановленисем тăрăх параççĕ.

10. Çапла тăвас: нимĕç оккупацийĕнчен 1943 çулта ирĕке кăларнă районсенчи колхозсем государствăна 1943 çулхи тырпулран паракан çĕрулмипе пахча-çимĕçсене Хĕрлĕ Çар фондне хываççĕ, çавна ăна пухса илмелли кашни гектартан çакăн пек нормăсемпе шутласа илеççĕ.

(центнерпа)	çĕрулми	пахча-çимĕçсем
Воронеж облаçĕ	7	14
Калинин »	6	12
Курск »	6	12
Орел »	7	16
Ростов »	4	14
Смоленск »	7	10
Сталинград »	4	10
Краснодар крайĕ	7	16
Ставрополь »	6	16
Украина облаçĕсем	5	16

Халĕ усă куракан улăштармалли эквивалентсем тăрăх çĕрулми вырăнне пахча-çимĕçсем е тата пахча-çимĕçсем вырăнне çĕрулми пама юрать.

11. Нимĕç оккупацийĕнчен 1943 çулхи июлĕн 1-мĕшĕ хыççăн ирĕке кăларнă районсенчи колхозсем 1943 çулта пухса илнĕ утăран государствăна паракан утта Хĕрлĕ Çар фондне—сухалакан çĕрĕн, шыв илекен улăхсен тата шыв илмен çарансен кашни гектарĕнчен çакăн пек нормăсемпе хываççĕ:

Кашни гектартан утă памалли норма килогрампа	сухалакан çĕртен	шыв илмен çарансенчен	шыв илекен улăхсенчен
Орел облаçĕ	1	9	20
Смоленск облаçĕ	3	18	29
Курск облаçĕ	1	10	20
Калинин облаçĕ	4	16	29
Украина облаçĕсем	4	18	35

Нимĕç оккупацийĕнчен 1942—43 çулсенчи кĕркуннепе хĕллехи тапхăрта ирĕке кăларнă ытти мĕнпур районсенчи колхозсем государствăна утă Оборонăн Государственный Комитечĕ 1943 çулхи июлĕн 27-мĕшĕнче йышăннă 3.823-с номерлĕ постановлени тăрăх параççĕ.

12. Облаçсен (крайсен) исполкомĕсене, совнаркомсене, ВКП(б) Обкомĕсемпе крайкомĕсене çак постановленин 9-мĕш, 10-мĕш тата 11-мĕш пункчĕсенче кăтартса панă тăрăх, государствăна тĕштырă, хĕвелçаврăнăш, çĕрулми, пахча-çимĕçсемпе утă памалли нормăсене, Наркомзаг çирĕплетнĕ тăрăх, районсен уйрăмлăхне кура çав нормăсене пĕчĕклетсе е пысăклатса пама право парас, анчах çÿлте кăтартса панă нормăсене вăтамран тытса пымалла.

Райисполкомсемпе ВКП(б) райкомĕсене, Наркомзагăн облаçри (крайри республикăри) уполномоченнăйĕ çирĕплетнĕ тăрăх, государствăна тĕштырă, хĕвелçаврăнăш, çĕрулми, пахча-çимĕçсемпе утă памалли районсем тăрăх тунă нормăна, 50 процент виçинчен иртмесĕр, уйрăм колхозсене пĕчĕклетсе е пысăклатса пама ирĕк парас, анчах района пĕтĕмĕшпе илсен, государствăна тĕштырă, хĕвелçаврăнăш, çĕрулми, пахча-çимĕçсемпе утă памалли нормăсем çав район валли çирĕплетсе панă нормăсемпе çирĕппĕн килĕшсе тăччăр.

13. Нимĕç оккупацийĕнчен 1942—43 çулсенчи кĕркуннепе хĕллехи тапхăрта ирĕке кăларнă районсенчи колхозсене, çавăн пекех тата хăй вăхăтĕнче выльăх-чĕрлĕхсене эвакуациленĕ районсенчи колхозсене государствăна обязательнăй йĕркепе аш-какай, сĕт тата çăм парас ĕçе, колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх хисепĕ тĕрĕссипе мĕн чухлине кура, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1942 çулхи декабрĕн 20-мĕшĕнче йышăннă 1989-мĕш номерлĕ постановлени тăрăх хутшăнтараççĕ.

14. Çапла тăвас: нимĕç оккупацийĕнчен 1943 çулхи июлĕн 1-мĕшĕ хыççăн ирĕке кăларнă районсенчи колхозниксен хуçалăхĕсем, единоличниксен хуçалăхĕсем, рабочисен, служащисемпе алăстаçисен хуçалăхĕсем 1943 çулта пухса илнĕ тĕштырăпа çĕрулмине Хĕрлĕ Çар фондне акнă çĕр лаптăкĕн кашни гектарĕнчен çакăн чухлĕ параççĕ: колхозниксен хуçалăхĕсем, рабочисен, служащисен тата кооперацире тăракан алăстаçисен хуçалăхĕсем — колхозсем валли тунă нормăран 30 процент ытларах хываççĕ.

15. Çапла тăвас: нимĕç оккупацийĕнчен 1943 çулхи июлĕн 1-мĕшĕ хыççăн ирĕке кăларнă районсенчи колхозниксен хуçалăхĕсем, единоличниксен хуçалăхĕсем тата яллă вырăнсенче пурăнакан рабочисен, служащисен тата алăстаçисен хуçалăхĕсем, вĕсен харпăрхăй хуçалăхĕсенче выльăх-чĕрлĕх пур пулсан, 1943 çулăн иккĕмĕш çурçулĕнче Хĕрлĕ Çар фондне аш-какайпа сĕт çакăн пек нормăсемпе хываççĕ:

Колхозниксен хуçалăхĕсем, рабочисен хуçалăхĕсем, служащисемпе кооперацире тăракан алăстаçисен хуçалăхĕсем валли тунă норма	Пĕр хуçалăхран аш-какай чĕрĕ виçепе шутласан çакăн чухлĕ памалла килогрампа	Пĕр ĕнерен сĕт памалла литрпа
Орел облаçĕ	15	60
Смоленск облаçĕ	15	60
Курск облаçĕ	15	50
Калинин облаçĕ	15	60
УССР облаçĕсем	15	50

Единоличниксен хуçалăхĕсемпе кооперацире тăман алăстаçисен хуçалăхĕсем аш-какайпа сĕт памалли нормăсене колхозниксен хуçалăхĕсем валли тунă нормăсенчен 30 процент ÿстерсе тăваççĕ.

16. Облаçсен (крайсен) исполкомĕсене, совнаркомсене, ВКП(б) обкомĕсемпе крайкомĕсене, Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕпе килĕштерсе, çак постановлени тăрăх государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли сроксене палăртса хума хушас.

17. СССР Хатĕрлев Халăх Комиссариатне тата Аш-какайпа Сĕт-çу Халăх Комиссариатне нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă районсенчи колхозсен эвакуациленĕ выльăх-чĕрлĕхĕсене шута илме, вĕсем валли тунă обязательствăсенчен иртерсе тата çав выльăх-чĕрлĕхсем эвакуацире пулнă облаçсен планĕсенчен иртерсе государствăна мĕн чухлĕ выльăх-чĕрлĕх панине шута илсе тухма тата государствăна панă çав выльăх-чĕрлĕхсене çав хуçалăхсем каярахри çулсенче государствăна аш-какай панă шута кĕртес тĕлĕшпе хăйсен сĕнĕвĕсене СССР Совнаркомне тăратма хушас.

18. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1943 çулхи июлĕн 10-мĕшĕнче йышăннă 743-мĕш номерлĕ постановление кăштах улăштарса, Курск облаçĕн районĕсенчи колхозсем 1943 çулхи тырпулран Хĕрлĕ Çарăн тырă фондне тĕштырă памалли плана малтан çирĕплетнĕ 9.000 пин пăт вырăнне 4.000 пин пăт памалла туса çирĕплетес.

Курск облисполкомĕпе ВКП(б) Обкомне вунă кунлăх срокра, çÿлте кăтартнипе килĕштерсе, 1943 çулхи тырпулран Хĕрлĕ Çарăн тырă фондне тĕштырă памалли нормăсене районсем тăрăх пĕчĕклетме тата колхозсен обязательствисене пĕчĕклетме хушас.

19. 1943 çулхи тырпулран тырпул хатĕрлемелли плана Сталинград облаçĕ тăрăх пĕтĕмпе 9.000 пин пăт чухлĕ чакарас. Çав майпа, колхозсем иртнĕ çулсенче МТС ĕçĕсемшĕн натуроплата йĕркипе тÿлеймен 1.024 пин пăт тырра, 1943 çулта тÿлемеллескерне, тата колхозсем 1943 çулти тырпулран обязательнăй йĕркепе памалли 4.676 пин пăт тырра тата Хĕрлĕ Çар фондне памалли 3.300 пин пăт тырра 1944 çулти тырпулран памалла тăвас.

Сталинград облаçĕнчи колхозсене 1943 çулта обязательнăй йĕркепе йĕтĕн тата клещевина парассинчен хăтарас тата колхозсем иртнĕ çулсенче татман парăмсене: йĕтĕн енĕпе—6.385 тонна, клещевина енĕпе — 1.633 тонна чухлĕ парăма пăрахăçа кăларас.

Сталинград облаçĕнчи колхозсенче иртнĕ çулсенче горчица енĕпе юлнă 13.920 тонна чухлĕ парăма пăрахăçа кăларас тата Сталинград облаçĕнчи колхозсене 1943 çулшăн обязательнăй йĕркепе горчица парассинчен хăтарас.

(Юлашки çитес номерте пулать)

ВЦСПС-па Çулйĕр Халăх Комиссариатĕнче

ВЦСПС тата Çулйĕр Халăх Комиссариачĕ чугунçул транспорт работникĕсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи июль уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Канашри вагонсем юсакан завода (начальникĕ Поздняков юлташ, партбюро секретарĕ Коломиец юлташ, завком председателĕ Мосенко юлташ) Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне тата иккĕмĕш преми памалла тунă

Хĕрлĕ ялава хамăртах хăваратпăр

ÇĔМĔРЛЕ, августăн 24-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Пирĕн «Большевик» завод коллективĕ икĕ уйăх хушшинчĕ ВЦСПС-па Çăмăл промышленность Халăх Комиссариачĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне хăйĕн аллинче тытса тăрать.

Ĕнер Сталин юлташ Харьков хулине ирĕке кăларакан войскăсене панă приказа итленĕ хыççăн заводри цехсенче митингсем пулса иртрĕç. Рабочисемпе инженерла-техникла работниксем, Сталин юлташăн приказĕпе хавхаланса, тата лайăхрах ĕçлеме, ВЦСПС-па Çăмăл промышленность Халăх Комиссариачĕн ялавне август уйăхĕнче те хамăр аларах хăварма сăмах пачĕç.

Завод коллективĕ августра продукци туса кăлармалли плана 23 кун хушшинче 119,7 процент тултарчĕ. Халĕ планран иртерсе продукци кăларать.

С. Я. РОЗЕНБЕРГ,
«Большевик» заводри партбюро секретарĕ.

Ответлă редактор В. Н. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

Типография №1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф 6 53 88 п. ц.

НТ 223